# „АЧАСЕНЕ ЧИ МАЛТАНАХ ИЛЕМЛӖ ӲКЕРЧӖКСЕМ ТАТА КӖВӖЛӖХ КИРЛӖ"

*Николай ИШЕНТЕЙ:*

***Николай ИШЕНТЕЙ** ятне кӗҫӗн ҫулхи вулакансем аван пӗлеҫҫӗ. Чӑваш кӗнеке издательствинче унӑн илемлӗ те интереслӗ хайлавӗсем ҫулсерен пичетленсе тухаҫҫӗ: "Хӳреллӗ дневник", "Тӗрӗллӗ ҫыру тӗлӗнтермӗшӗсем"... Кӑҫал ак тепӗр кӗнеке – "Ташлакан купӑс" кун ҫути курчӗ. Ҫыравҫӑн чӗлхи хӑй евӗрлӗ – кирек хӑш повеҫӗ-калавӗ те кӗвӗленсе вулаnать. Шӑпӑрлансене чи малтанах илемлӗ ӳкерчӗксем тата ҫемӗлӗх кирлӗ – ҫакна ҫирӗп тытса пырать вӑл.*

*Кӑҫал эпӗ унӑн виҫҫӗмӗш кӗнекине редакцилерӗм, анчах пӗрре те унӑн пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ пирки ларса калаҫман. Халӗ пушӑ вӑхӑт тупса автора хӑйӗнпе тӗплӗнрех паллаштарма ыйтрӑм.*

– Эпӗ Ҫӗрпӳ районӗнчи Тури Шурҫырма ялӗнче ҫуралнӑ. Красноармейски вӑтам шкулӗнчен вӗренсе тухсан Чӑваш патшалӑх ял хуҫалӑх институтне /халӗ академи/ вӗренме кӗтӗм. Ҫарта пулнӑ хыҫҫӑн тӑван совхозра инженерта ӗҫленӗ чухне ӑнлантӑм: техника инженерӗ мар, пурнӑҫра чун инженерӗ пулмалла манӑн. Ҫавӑнпа та Чӑваш патшалӑх университетӗнче чӑваш филологийӗпе культура факультетне кукӑмсӑр майпа вӗрентӗм. Ҫав вӑхӑтрах тӑван ял шкулӗнче чӑваш чӗлхипе литература учителӗнче ӗҫлеттӗм. "Хыпар" хаҫатра та ҫулталӑк тӑрӑшма тӳр килчӗ. Чылай интереслӗ ҫынпа курнӑҫрӑм. Пултарулӑх ӗҫӗнче хама кирлине илтӗм. Халӗ Ҫӗрпӳ районӗнчи Патӑрьел салинчи шкулта вӑй хуратӑп.

**– Хайлавсем ҫырас туртӑм сирӗн хӑҫан ҫуралнӑ?** – интереслентӗм эпӗ.

– Ҫырма эпӗ ача чухнех пуҫланӑ, анчах ҫынна кӑтартсах кайман. Пӗррехинче район хаҫачӗ ирттернӗ литература конкурсне хутшӑннӑччӗ, сӑвӑсем ярса панӑччӗ. Кӗҫех ман ят ҫӗнтерӳҫӗсен йышне лекнине пӗлтӗм. Эппин, манра пултарулӑх тӗшши пур тесе палӑртрӑм хам ӑшра, малалла ҫӗнӗ йӗркесем шӑрҫалас ӗмӗт ҫуралчӗ. Университетра вӗреннӗ чух ӑсталӑх тата та туптанчӗ. 1994 ҫултанпа – Раҫҫей писателӗсен союзӗн членӗ.

**– Паянхи куна мӗнле кӗнекесемпе савӑнтартӑр кӗҫӗн ҫулхи вулакансене?**

– Чи пӗрремӗш кӗнеке – "Чӗвӗлпи" сӑвӑ пуххи 1993 ҫулта пичетленнӗччӗ. А.Ыхра редакциленӗччӗ ӑна. Ун хыҫҫӑн "Ҫӗр пин чечек ҫӗр-шывӗнче", "Ҫавра кӳлӗ хӗрринче" /2001/, "Хӳреллӗ дневник" /2004/, "Тӗрӗллӗ ҫыру тӗлӗнтермӗшӗсем" /2005/ ҫитрӗҫ вулакансем патне. Вӗсенчен иккӗшӗ – "Ҫавра кӳлӗ хӗрринче" тата "Хӳреллӗ дневник" "Ҫулталӑкри чи лайӑх вуланакан кӗнеке" хисепе тивӗҫрӗҫ, лауреат пултӑм. Анчахрах ав "Ташлакан купӑс" кун ҫути курчӗ. Унӑн хӑш-пӗр сыпӑкӗпе "Тетте" журнал тусӗсем паллашнӑ та ӗнтӗ. "Хуплу пӗҫерни", "Ырӑ вӗрентӳ" ҫак журналта пичетленсе тухнӑччӗ.




Николай Петровичӑн ҫӗнӗ хайлавӗ те ыттисем пекех кӗвӗллӗ, сюжечӗ те интереслӗ. Тӗп сӑнар – пилӗк ҫулти Майрукка киленче час-часах асламӑшӗпе юлать. Лара-тӑра пӗлменскер, ҫиччас хӑйне валли пӗр-пӗр пӑтӑрмах шыраса тупать.

**– Кам сӑнарӗ пытаннӑ-ши унра?**

– Мӑнукӑм Вероника ҫуралсан кӗнеке ҫырас шухӑш тӗвӗленчӗ. Ӑна эпӗ 2004 ҫулта хайларӑм. Сӑнар Вероникӑна ҫывӑх, кӗнекине те ӑнах халалларӑм. Ача – Турӑ пек таса кӑмӑллӑ. Ача-пӑча валли ҫырнӑ чух хамӑн та чун-чӗре тасалать. Хӑш-пӗр самантне хам пурнӑҫран илнӗ. Сӑмахран, "Мая, Маюкка тата пӗртен-пӗр ачаллӑ ял" сыпӑкра Майрукка валли выляма Вӑтакасра ача ҫук. Ку – манӑн ачасен пурнӑҫӗнчи ӳкерчӗк. Вӗсем ҫитӗннӗ чух пӗр вӑхӑт ялти ҫамрӑксем пурте, хальхи вӑхӑтри пекех, ҫӗр-шывӑн тӗрлӗ кӗтесне саланса пӗтнӗччӗ, ял урамӗнче ача сасси илтӗнми пулнӑччӗ. Ҫак ыйту халӗ те пӑшӑрхантарать мана.

**– Мӗншӗн-ха тӗп сӑнара Майрукка тесе чӗнеҫҫӗ, Чиперук е Маюкка мар?**

– Хальхи вӑхӑтра чӑваш хушшинче Нарспи е Чиперук ятлӑ хӗр ачасене тӗл пулатӑн-и эсӗ? Ҫук. Паян урамра Жаннӑсем, Дианӑсем выляҫҫӗ. Тепӗр майлӑ каласан – вырӑсланса пырать чӑваш халӑхӗ. Манӑн тӗп сӑнар та ҫитӗнсен майра пулма ӗмӗтленет...

**– Юлашкинчен тепӗр ыйту парам-ха, Николай Петрович. Сирӗн кӗнекесене чылай художник илемлетнӗ. Ҫак герой сӑн-сӑпатне Татьяна Немцева художник уҫса пачӗ. Мӗнлерех йышӑнатӑр ку Майруккана?**

– Аван. Питӗ чипер, алла тытма кӑмӑллӑ кӗнеке "пиҫсе тухрӗ" издательствӑран. Тавтапуҫ сире.

**Ольга ФЕДОРОВА.**